К 4с(Чув)
Н63
27887-чув.

П. Н. Николаев

# БУКВАРЬ




А Ӑ Б В
Ӗ Ж З И
Хатӗр пул
Н О П Р
Ӳ Ф Х Ц
Ъ Ы Ь


Г Д Е Ё
Й К Л М
С Ҫ Т У
Ч Ш Щ
Э Ю Я

КФ

К 4с(
Н 6

П. Н. НИКОЛАЕВ

# БУКВАРЬ

32-мӗш кӑларӑм



КР

Чӑваш АССР Ҫутӗҫ министерстви
ҫирӗплетнӗ

ШУПАШКАР
ЧӐВАШ КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
1985

4с(4чв)(075)

ПРОВЕРЕНО 07



27887-чув.

Чувашская
Республиканская
БИБЛ ЕКА
. Горького



























































# Аа



а-а-а!















o o o l l l o o o l l l o o o l l l o o o

a a a a a a a a a a a a a a



# У у

У

у

у-у-у!















а-у!

*а а а у у у а а а у у у а а а*

*ау ау ау ау ау ау ау ау ау*



у-а!





у у у у у у у у у у у у у

а а а а а а а а а а а а а

уа уа уа уа уа уа уа уа



# Нн



ан!





н | | | - - - - - l l l l l l l l l l l l l l

н н н н н н н н н н н н н н н н



27 887-чув.

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького



на!

| | |
|---|---|
| ан | а-на |
| на | у-на |

Ау, Анна!



Ан-на



# ну!

ан | на | ну

**а | у | н**

*ан ан ан ан ан ан ан ан ан*

*на на на на на на на на на*

*Н Н Н Н Н Н Н*

# Лл

Л

Л







а-ла



| | |
|---|---|
| ала | .ла |
| алу | а.а |
| ула | ул. |

**а | у | н | л**

л л л л л л л л л л л л л



ула ☐

**ла | лу | на | ну | ау | уа | ал**

*л л л л л л л л л л л л л*

# Мм



ам! ам!







| | | |
|---|---|---|
| ам | ма-на | ман |
| ма | ма-ла | лум |



му, му!

| | | |
|---|---|---|
| ан | му | ма-на |
| ау | ам | ул-ма |
| уа | ма | Ан-на |

м м м м м м м м м м м м м



Ан ман, Анна!
Анна манман.

**Аа | Уу | Нн | Лл | Мм**



# Ăă



у-лăм



ă-ман

| | | |
|---|---|---|
| ă-на | ан-лă | ă-ман |
| а-лă | ма-ла | у-лăм |
| а-ла | ал-ла | у-нăн |








| | |
|---|---|
| у-лăм | ăн-лан |
| ă-ман | ма-нăн |
| у-нăн | ал-лăн |

Анна, ăнлан, ан ман!

*ă ă ă ă ă ă ă ă ă ă ă ă ă ă*

*а-лă алă алă алă алă алă алă*



Аа | Уу | Нн | Лл | Мм | Ӑӑ

*А А А А А А Ӑ Ӑ Ӑ Ӑ Ӑ*

*Ӑ-ман. Ӑман. Ӑман. Ӑман. Ӑман.*

# Рр



ра-ма





| | | |
|---|---|---|
| у-ра | ур-лă | у-**рам** |
| а-ра | нă-рă | а-**ран** |



| | | |
|---|---|---|
| **у-ра**м | ар-ман | у . а |
| **ур**-лă | Ра-ман | нă . ă |
| **нă-рă** | лар-ман | у . ам |

*р / / / / / / / / / / / / г г г г г г г г г*

*р р р р р р р р р р р р р р р р*

*ра-ма рама рама рама*



**Арман.**

Раман, лар!
На арман!
Арман умра.

*Р Р Р Р Р Р Р Р Р Р Р Р*

*Ра-ман. Раман. Раман умра.*

# Хх



ух!



хур



ху-ран

| | | |
|---|---|---|
| ах | ху-ла | хум |
| ух | ху-лă | хул |
| ха | ху-ра | хам |
| ху | хă-ма | хал |

Анна хула-ра.
Урам-ра халăх.

# Ан хăра!



Раман урамра.
Ула хур урамра.
—Раман, на хулă!
Ан хăра, Раман!
Раман хăраман.



*х э э э э э э с с с с с с с х х х х*

*ха-лăх халăх халăх халăх*



ху-рăн

**а | у | н | л | м | ă | р | х**

*х э э э с с с с х х х х х*

*Ху-рăн. Хурăн. Хурăн хăма.*

# Ыы



хыр

ы-ră
ы-ра
ы-ран
ыр-лăх

хыр
хыр-лăх
хы-рăм
ых-ра





ых-ра



Хыр хăма хулăн.
Анна, ыхруна хур.

ы — рă
ы — ран

. ран    х . р

ы ь ь ь ь ı ı ı ы ы ы ы ыхра

Ы Ь Ь Ь ı ı ı Ы Ы Ы Ырă

# Шш

| | | |
|---|---|---|
| аш | шу-хă | шу-хăш |
| ăш | ху-шă | шă-рăх |
| уш | шу-рă | хă-мăш |
| ша | шă-на | мă-шăр |





Шурă лаша. Хура лаша.
Шурă лаша шухă. Хура лаша шăмарнă.

| | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| а | у | н | л | м | ă | р | х | ы | ш |

*ш ш ш ш ш ш ш ш ш шăна*

*Ш Ш Ш Ш Ш Шурă лаша.*

# Вв



| | | |
|---|---|---|
| вар | а-ван | вы-рăн |
| вăл | а-вал | вăр-ман |
| авă | ы-вăл | ху-нав |

**Вăрман.**

Авă вăрман. Вăл хунав вăрман. Хунав вăрман аван.









| | | |
|---|---|---|
| вăл | хă-вăл | ы-вăн-нă |
| лав | выр-нă | шă-вар-нă |
| шав | шав-лă | у-лăх-ра |

**Улăхра.**

Раман улăхра. Улăхра шыв. Раман  шăварнă.

в в в в в в в в в в в в в в

вăр-ман вăрман вăрман



## Шыв.

Шыв ăшă. Вăл ăшăх. Анна шывра. Шыв хумханнă. Шура ларнă. Вăл ывăннă.

*В в в в в в з з з з з з В В В*

*Вăл. Вăл. Вăл ыраш вырнă.*

# Сс



су-ха-ра



| | | |
|---|---|---|
| ăс | ăс-лă | сă-мах |
| лăс | са-сă | на-сус |
| ă-вăс | сă-вă | Сла-ва |



## Слава.

Слава сăвă вуланă. Сăвва вăл аван вуланă. Слава саваннă.



## Сулă.

Шывра сулă. Сулă вăрăм. Сулăра хыр, хурăн, ăвăс. Хурăн шурă. Хыр сарă. Вăл сухăрлă. Сулла Раман хураллана.

*с с с с с с с с с с с с с с с с*

*сулă сулă сулă сулă сулă*

  

х . р    ху . ăн    ăвă .



ла . а    сы . на    су . ăх

*С С С С С С С С С С С С С С С*

*Сла-ва. Слава. Слава вуланă.*

# Ии





И-ра

| | | |
|---|---|---|
| ир | мир | ир-хи |
| И-ра | хир | шă-ши |
| И-ван | вир | Ни-на |

| | | | | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| а | у | н | л | м | ă | р | х | ы | ш | в | с | и |



Ни-на
И-ра
сли-ва
хир

Нина шăлнă. Вăл аван шăлнă. Ира ăна ырланă.

*и и и и и и и и и хир хир*

*И И И Ирина. Ирина ларнă.*



# Çç

Ма-руç

| | | |
|---|---|---|
| çа-ва | çар | çыр-ма |
| са-ва | сар | сыр-ма |
| çу-ха | çăл | çыр-ла |
| су-ха | çул | çăм-ха |

## Маруç.

Маруç çăм алсиш çыхнă. Алсиш шурă. Алла ăшă. Маруç савăннă.



## Çулла.

Çулла ăшă. Сывлăш уçă. Сывлама çăмăл.

Маруç, Шура, Михала çум çумланă. Çумăр хыççăн çум çумлама аван.

Авă Раман, Ваçça. Раман — лаша. Ваçça ăна хăваланă.

*ç ç ç ç ç ç ç ç ç ç ç çырла*



Ç C C C Ç Ç Ç Ç Ç Ç Ç Ç

Çу-мăр. Çумăр. Çумăр çунă.

# Пп



пă-ру



| | | | |
|---|---|---|---|
| сап | пу-ра | пуç | хы-пар |
| хуп | пă-ра | пыл | па-лан |
| çип | пу-лă | пăр | ха-лап |
| сып | шă-па | пир | пă-рăç |
| шăп | пă-ши | пур | пă-шал |

## **Пулăшу.**

Анна аппа пăру пăхнă. Павăлпа Нина ăна пулăшнă. Анна аппа савăннă.



## Панулми.

Ирина аппа урамра ларнӑ. Унӑн панулми пулнӑ. Урампа Павӑл пынӑ. Ирина аппа Павӑла панулми панӑ.

*п п п п п п п п п п п п п п п п п*

*пӑ-ру пӑру пӑру пӑру пӑру*

  

. улă  п.ра  пан.лми

  

пă.ал  п.рçа  пăш.

*П | | | | П П П П*

*Павăл. Павăл упалипа пынă.*



# Чч

| | | |
|---|---|---|
| а-ча | чул | чă-рăш |
| ар-ча | чир | чă-ваш |
| ха-чă | чăм | ву-чах |
| пă-чă | чыс | чă-мăр |



чăх

## Аслă çул.

Аслă çула чул сарнă. Çав çулпа машина пынă. Ача çул урлă чупма шухăшланă. Машинăна асăрханă, чупман.





ч ч ч ч ч ч ч чул

Ч Ч Ч Ч Ч Чăпăш.

# Ее





чи-е
çи-ес
хă-ех



Авă чие пахчи. Нина пахчана пынă. Унта вăл çум çумланă.

Нина аллисене çунă. Вара вăл чие çырли пухнă.



| | | |
|---|---|---|
| ум-не | пе-нал | а-сан-не |
| пи-ре | пи-леш | Ма-ри-не |
| ан-не | çе-рем | виç-ми-не |

*е е е е е е е е е е е е е е е е е*

*ш-е ше ше ше ше ше ше*



## Асанне парни.

Маринен асанне пур. Вӑл Маринене пенал илсе панӑ. Марине асанне ҫумне ларнӑ. Пеналне уҫса пӑхнӑ. Вӑл савӑннӑ.

Е е е е е Е Е Е Е Е Е Е Е Е Е

Елена. Елена ҫыру ҫырнӑ.

# Тт





| | | |
|---|---|---|
| ут | ва-тă | хурт |
| хут | ву-тă | турт |
| шут | ту-ра | тур-та |
| пит | ту-рат | ту-тăр |

**Маттур ачасем.**

Тарас мучи ватă. Ăна ачасем вутă татса панă. Тарас мучи ачасене тав тунă.



## Çырлара.

Унтрипе Настаç вăрманта çырла татнă. Çырли тутлă пулнă.

## Арман.



Унтри арман тунă. Ăна хапха çине лартнă. Арман çилпе хăвăрт авăрнă.

*т т т т т т т т т т т*

*ту-рат турат турат*



## Ирхине.

Тул çутăлнă. Тамара вăраннă.

— Тамара, тăр, çăвăн!

Тамара тăнă, шăлне тасатнă, çă**вă**ннă. Унтан вăл тумланнă.

**та | ту | ты | ти | те**

*Т Т Т Т Т Т Т Т*

*Тамара. Тамара питне çунă.*

# Йй



| | | |
|---|---|---|
| вăй | йă-нăш | йăм-ра |
| май | йы-вăр | хăй-ма |
| мăй | мă-йăр | хăй-ра |
| хăй | хă-йăр | йыш-лă |



йă-ва

## Вăрманта.

Ачасем вăрманта пулнă. Унта йывăç нумай. Ачасем мăйăр чылай татнă. Йăтма та йывăр.



## Улай.

Иван пичче—сунарçă. Унăн йытă пур. Вăл ула. Ăна Улай тесе йыхăрмалла. Улай йăваш йытă.

*й й й й й й й й й й йăва*

*Й Й Й Йытă. Йытă йăви.*

# Кк



ку-шак

| | | |
|---|---|---|
| ак | ку | та-ка |
| сак | кун | та-кан |
| рак | кас | ка-шӑк |
| мӑк | кас-ка | ҫӑ-кӑр |



ку-рак

**Кушак.**

Куҫма куккасен ула кушак пур. Вӑл ҫемҫе ҫӑмлӑ, кӑвак куҫлӑ. Унӑн ҫамки шурӑ. Ӑна Ваҫкӑ тесе йыхӑрмалла. Ваҫкӑ шӑши тытса ҫиет.



## Ачасемпе мулкач.

Ачасем вăрмана кайнă. Вăрманта кăмпа нумай. Ачасем кăмпа пуçтарнă. Ачасенчен инçех мар мулкач пулнă. Вăл ачасенчен хăранă та тарма пуçланă. Ачасем те мулкачран хăранă.

*к | | | | | ҫ ҫ ҫ ҫ ҫ ҫ к к к к к*

*кăм-па кăмпа кăмпа кăмпа*



## Ачасен вăййи.

Ачасем вăйăра. Алик кушак пулнă. Клава шăши пулнă. Кушакăн шăшие тытмалла. Шăшин кушакран тармалла.

— Клава, Клава, тар, ан тыттар!

Клава тарайман. Ăна Алик тытнă.

*Ку-шак. Кушак çемçе çăмлă.*

# Ээ



| | | | |
|---|---|---|---|
| э-пир | э-мел | эр-не | Эн-тип |
| э-сир | э-тем | эр-тел | эп-пин |



э-мел

## Эмел.

Энтип сывмар выртнӑ. Вӑл шӑнса пӑсӑлнӑ. Энтипе пӑхма тухтӑр пынӑ.

Тухтӑр Энтипе урама тухма хушман. Ӑна эмел панӑ. Эмел сывалма пулӑшнӑ. Энтип сывалнӑ.



## Шăнапа эрешмен.

Йывăç тураттисем хушшинче эрешмен карти пулнă. Унта эрешмен ларнă. Эрешмен картинче шăна чăлханнă. Эрешмен шăнана тытнă.

э э э э э э э э э э э э э эр-не эрне

Э Э Э Э Э Э Э Э-мел. Эмел.

# Ӳ ӳ



| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| ӳс | ӳп-ре | тӳ-ме | ӳп-ке | сӳс |
| уç | ӳп-ле | çӳ-хе | хӳ-ме | çӳç |
| ӳт | сӳ-ре | хӳ-ре | ӳт-пӳ | шӳт |
| пӳ | çӳ-çе | тӳ-пе | çӳ-хӳ | çӳп |

## Ӳпле.

Вăрман уçланки тӳремре. Уçланкăра ӳпле пур. Ăна çӳçерен тунă. Ӳпле сарлака. Çумăр çума пуçланă. Ачасем ӳплене пытаннă. Çумăр çума чарăннă. Ачасем ӳплерен тухнă та киле кайнă.



## Ҫӳҫе.

Ҫӳҫе шыв хӗрринче те, вӑрманта та ӳсет. Унӑн турачӗсем ҫинҫе те вӑрӑм, лайӑх авӑнаҫҫӗ. Ҫӳҫе хуллисенчен карҫинккасем ҫыхаҫҫӗ. Ҫӳҫен хуппи те усӑллӑ. Унпа тир тунӑ чухне усӑ кураҫҫӗ.

*ӳ ӳ ӳ ӳ ӳ ӳ ӳ ӳ ӳ сӳре сӳре*
*У У У У Упа. Ӳ Ӳ Ӳ Ӳ Ӳпле.*

# Ĕĕ





| | | | |
|---|---|---|---|
| ĕ-не | сĕ-лĕ | се-нĕк | пӳ-лĕм |
| сĕт | çĕ-çĕ | хĕ-вел | çи-мĕç |
| хĕл | кĕ-тӳ | лĕ-пĕш | ти-мĕр |

### Шкул пахчи.

Пирĕн шкулăн пахча пур. Ĕлĕкрех вăл пысăк марччĕ. Кăçал шкул ачисем çĕнĕрен çимĕç йывăççисем лартрĕç.

Халĕ шкул пахчи пысăкланчĕ. Унта шкул ачисем ĕçлеççĕ.

Шкул пахчинче панулми, тĕрлĕ çырла нумай туса илетпĕр.

Пирĕн шкулăн пахчи питĕ илемлĕ.



## Кĕркунне.

Çанталăк сивĕте пуçларĕ. Çулçăсем саралчĕç. Тырпула хиртен пуçтарса кĕртрĕç. Вĕçен кайăксем ăшă енне вĕçсе кайрĕç. Ачасем шкула çӳреççĕ.

Пахчасенче те кĕрхи ĕçсем вĕçленсе пыраççĕ. Пурте тимлесех лайăх хĕл каçма хатĕрленеççĕ.

*ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ ĕçлен ĕçлен*

*Ĕ Ĕ Ĕ Ĕ Ĕне. Ĕне утă çинĕ.*

# Оо






| | | |
|---|---|---|
| ох | Во-ва | По-ли-на |
| хор | со-вет | у-рок-ра |
| у-рок | от-вет | ву-ла-рĕç |
| пе-ро | кро-лик | шут-ла-рĕç |
| ки-но | о-пыт | вĕ-рен-тет |

## Урокра.

Урок пуçланчĕ. Ачасем класра лараççĕ. Пĕрремĕш урокра вĕсем вуларĕç. Иккĕмĕш урокра шутларĕç. Унтан пысăк перемена пулчĕ. Виççĕмĕш урокра ачасем çырма тытăнчĕç. Пурте лайăх çыраççĕ. Тăваттăмĕш урокра рисовани пулмалла. Ачасене Полина Ивановна вĕрентет.









Ку ӳкерчӗксенче мӗн-мӗн кӑтартнӑ? Вӗсем мӗн тума кирлӗ?

о о о о о о о о о о о о урок

О О О О О О О О О Ответ.

# Ь





конь-ки

| | | |
|---|---|---|
| ку-кăль | су-пăнь | конь-ки |
| мă-кăнь | мă-кăль | вы-льăх |
| хал | са-хал | ту-рат |
| халь | а-халь | ту-рать |

**Марье.**

Марье шкула çӳрет. Вăл Вальăпа пěр парта хушшинче ларать. Марье тăрăшса вěренет.

Марье килте те ахаль лармасть. Вăл кěнеке вулать, амăшне пулăшать.



**Пысăк савăнăç.**

Пирĕн атте ырă кăмăллă та ĕçчен çын. Вăл платник. Хальхи вăхăтра атте выльăх витисем тунă çĕрте ĕçлет.

Атте çемьешĕн те питĕ тăрăшать. Канмалли кун вăл хулана кайрĕ. Унтан вăл Вальăпа иксĕмĕр валли пальтосем, конькисем илсе килчĕ. Атте парнисем пире çав тери савăнтарчĕç. Эпир аттене тав турăмăр.

ь ь ь ь ь ь ь ь ь ь ь ь ь ь ь ь

конь-ки коньки. Çĕнĕ коньки.



**Кам-ши вăл?**

Кам пире ачашшăн
лăпкать пĕчĕкрен,
чипер çын тăвасшăн
çунать чĕререн?
Вăл — пирĕн анне!

*Пирĕн анне ырă кăмăллă.*



# Яя

| | | | |
|---|---|---|---|
| ял | я-лав | хă-яр | у-яв |
| ят | Я-кур | мă-ян | ту-я |
| ян | па-ян | пă-яв | яш-ка |
| я-ка | я-лан | у-яр | яс-мăк |



я-лав

**Якур.**

Манăн шăллăм Якур ятлă. Вăл пилĕк çулта. Эпĕ пĕрремĕш класра вĕренетĕп.

Час-часах эпĕ шăллăма кĕнекесем вулаdensa паратăп, ӳкерчĕксем кăтартатăп. Пушă вăхăтра эпир Якурпа вылятпăр. Пирĕн Якур — лайăх ача.



## Пирĕн ял.

Пирĕн ял Çавал хĕрринче. Вăл пысăк. Ялта пилĕк урам. Вĕсем пурте вăрăм. Вĕсенчен чи пысăкки Ленин ячĕпе хисепленет. Пирĕн ял Совечĕ çав урамра. Ял Совечĕн çурчĕ çине хĕрлĕ ялав çакнă.

Яла кĕнĕ çĕртех икĕ хутлă чул çурт ларать. Вăл шкул çурчĕ. Пирĕн шкулта нумай ача вĕренет.

*я-лав ялав ялав ялав ялав*



## Çĕнĕ шкул.

Ял вĕçĕнче, тӳремре,
капăр, çĕнĕ шкул ларать.
Кашни ир халь вăл пире
вĕренмешкĕн йыхăрать.

| | | |
|---|---|---|
| **ял** | па-**ян** | **ят** |
| Ва-**ля** | Са-**ня** | а-**тя** |

*Я-кур. Якур шкула каять.*

# Зз



| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Ли-за | Зо-я | зво-нок | ре-зин-ка | кол-хоз |
| Ро-за | Зи-на | зве-но | Зи-но-вий | сов-хоз |

**Звонок хыççăн.**

Перемена вĕçленчĕ. Лиза аппа звонок парать. Вĕренекенсем урока васкаççĕ.

Ачасем пурте класа кĕрсе ларчĕç. Урок пуçланчĕ. Ачасене Зоя Ивановна вĕрентет. Вĕсем тăрăшса вĕренеççĕ.

**за са | зу су | зо со | зя ся**



**Вылямалли кимĕ.**

Зиновипе Костя туслă. Пĕрре Костьăпа Зинови вылямалли кимĕ тунă. Кимĕ çине пĕчĕк хĕрлĕ ялав çакнă. Вĕсем киммине шыв лупашкине янă. Кăштах çил вĕрнĕ. Кимĕ шывра çиле май ишнĕ. Хĕрлĕ ялавĕ вĕлкĕшнĕ. Ачасем хĕпĕртенĕ.

*роза, звонок, резинка*

6. П. Н. Николаев.



### Колхоз пĕвинче.

Пирĕн колхоз пĕвинче
хур-кăвакал савăнать,
чăма-чăма ир çинче
шыва кĕрет, çăвăнать.

З з з з з з з З З З З З З З З

Зина. Зоя. Зинови. Захар.

# Юю



| | | | |
|---|---|---|---|
| юр | ю-ră | хă-ю | юн-кун |
| юл | ю-па | ю-хăм | юл-таш |
| ют | ю-ман | ю-мах | Ю-рий |

**Юман.**

Юман вăрманта ӳсет. Вăл çирĕп йывăç. Юмантан тĕрлĕ япаласем тăваççĕ. Юманăн хуппи те юрăхлă. Вăл сăрă тунă çĕре каять.

| | | |
|---|---|---|
| **юн**-кун | **юл**-таш | **ют** |
| А-**нюк** | И-**люш** | Пе-**тюк** |



## Анюкпа Илюш.

Анюкпа Илюш—пӗр ҫемьери ачасем. Анюк—асли. Илюш—кӗҫӗнни. Анюк виҫҫӗмӗш класра вӗренет. Илюш кӑҫал ҫеҫ шкула кайрӗ.

Илюша уроксем вӗренме Анюк пулӑшать. Вӗсем иккӗшӗ те лайӑх вӗренеҫҫӗ. Ҫавӑнпа вӗсене учительсем мухтаҫҫӗ.

*ю ||||- - - - о о о о о о ю ю ю*

*юрӑ юмах юнкун юман*



**Юр çăвать.**

Юр çăвать, юр çăвать,
хура çĕре шуратать.
Тухăр, ачасем,
пурте урама!
Тухăр хăвăртрах
юр купалама.

*Ю Ю Ю Ю Ю Ю Ю Ю Ю Ю Ю*

*Юр. Юр çăвать.*

# Жж



жур-нал | Жуч-ка

**Женя аппа.**

Женя аппа—почтальон. Вăл ял çыннисене çырусем, хаçат-журнал валеççе парать.

Хăйĕн ĕçне Женя аппа юрататъ. Вăл çынсемпе вăшавăт калаçать. Женя аппана пурте хисеплеççĕ.

| | | | |
|---|---|---|---|
| жа | шу | же | ши |
| ша | жу | ше | жи |



## Жучка.

Пирӗн йытӑ пур. Вӑл Жу́чка ятлӑ. Жучка кил-ҫурта сыхлать. Пирӗн пата ҫын пырсан, вӑл вӗрет.

Жучка манпа вылямa юрататъ.

## Тупмалли юмах.

*Калаҫмасть, юрламасть, ют ҫын пырсан, хуҫине систерет.*

(. . тӑ.)

*ж э э э э ч ч ч ч с с с с ж ж ж*

*Ж Э Э Э ч ч С С С Ж Женя*

# Бб






булавка

| | | |
|---|---|---|
| Бо-ря | ра-бочи | ав-то-бус |
| Лю-ба | бул-ка | бук-варь |
| би-лет | ба́н-ка | ок-тябрь |

**Кино курни.**

Рабочисен канмалли кун пулнă. Вĕсем хăйсен тăванĕсемпе клуба пухăннă. Унта кино курнă. Кино Октябрь кунĕсем çинчен пулнă. Рабочисене кино кăмăла кайнă.

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ба | пу | бы | пи | бо | пе | бя |
| па | бу | пы | би | по | бе | пя |



**Библиотека.**

Пирӗн ялта библиотека пур. Библиотекăра кӗнекесем, журналсем нумай.

Борис пичче кӗнеке нумай вулать. Вăл библиотекăна кӗнеке илме çӳрет.

Эпир те часах библиотекăри кӗнекесене вулама пуçлăпăр.

*б о о о о б б б б б б б*

*ра-бочи рабочи рабочи рабочи*



## Комбайн.

Пирӗн колхозăн комбайнсем пур. Комбайн—питӗ кирлӗ машина. Комбайн тырра пӗр вăхăтрах вырать, çапать, сăвăрать. Комбайн çын ӗçне нумай çăмăллатать.

*Б б б б б Б Б Б Б*

*Бук-варь. Букварь шкапра.*

# Дд



| | | |
|---|---|---|
| ра-дио | ор-ден | ме-даль |
| ди-ван | за-да-ча | Да-нил |



### Пирĕн килте.

Пирĕн килте радио, телевизор пур. Телевизор «Рекорд» ятлă.

Эпир час-часах радио итлетпĕр, телевизор куратпăр. Радиопа çĕнĕ хыпарсем пĕлтереççĕ, юрăсем юрлаççĕ. Телевизор кашни кунах кино кăтартать.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| та | дя | ту | ды | те |
| да | тя | ду | ты | де |



## Дежурнăйсем.

Класра кулленех дежурнăйсем пуласçĕ. Вĕсем класа ытти ачасенчен иртерех çитесçĕ. Дежурнăйсем класри йĕркене асăрхаççĕ. Вĕсемех класа уçăлтараççĕ, доскана, партăсене таса тытаççĕ.

д о о о д д д д д д д

дос-ка доска доска доска



## Йывӑр задача.

Лида задача шутланӑ. Анчах задача тухман.

—Пар, хам шутласа парам,—тенӗ пиччӗшӗ.

— Ҫук, ҫук, эпӗ хамах шутлатӑп,— тенӗ Лида. Вӑл задачӑна питӗ тӑрӑшса шутланӑ. Задача тухнӑ.

*Д Д Д Д Д Д Д Д Д*

*Дима. Дина. Даша. Данил.*

# Гг





гру-зо-вик

ва-гон
ге-рой
ла-герь
у-тюг

бри-га-да
гру-зо-вик
га-раж
Га-га-рин

## Урок вӗренни.

Генӑпа Галя—пӗр ҫемьери ачасем. Вӗсем иккӗшӗ те шкула ҫӳреҫҫӗ. Гена виҫҫӗмӗш класра вӗренет. Галя кӑҫал ҫеҫ вӗренме пуҫланӑ. Гальӑпа Гена урок хатӗрленӗ. Гена задача шутланӑ. Галя сӑвӑ вӗреннӗ. Генӑпа Галя мӗнле вӗреннине ашшӗ тӗрӗсленӗ.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| га | ку | го | ки | ге |
| ка | гу | ко | ги | ке |



**Колхоза пулăшни.**

Çулла эпир пионер лагерĕнче пурăнтăмăр. Лагерьти пурнăç питĕ савăнăçлă. Ачасем лагерьте сывлăха çирĕплетеççĕ.

Лагерьтен инçех те мар пысăк çаран пур. Вăл «Герой» колхозăн.

Эпир колхозниксене утă тавăрма тата пуçтарма пулăшрăмăр. Утта, грузовиксемпе турттарса, капана хыврĕç.

Маттур ĕçленĕшĕн колхоз бригадирĕ пире тав турĕ.

*г г г г г г г г г г г г г*

*грузовик, бригада, герой*



**Гена.**

Гена — пилĕк çулхи ача. Амăшĕ ăна пĕчĕк грузовик илсе панă. Грузовик Генăна питĕ килĕшнĕ. Унпа тĕрлĕрен япала турттарма пулать. Гена амăшне тав тунă.

Г Г Г Г Г Г Г Г Г Г

Гена. Гриша. Галя. Герман.

| | | |
|---|---|---|
| цех | милици | цир-куль |
| акаци | станци | страни-ца |
| цирк | сцена | кон-церт |



цир-куль

# Цц



## Канаш станцийĕ.

Пĕрре эпир Канаша кайрăмăр. Канаш— пысăк станци. Станцие час-часах поездсем çитсе чарăнаççĕ.

Эпир тавар турттаракан поезд куртăмăр. Вăл Хусантан Улатăра кайрĕ.

Çынсем лартса çӳрекен поезда та кĕтсе илтĕмĕр. Вăл Мускавран Хусана каякан поезд пулчĕ.

7. П. Н. Николаев.



**Циркра.**

Эпир, хулана кайсан, цирка кĕтĕмĕр. Циркра упасем, упăтесем, йытăсем выляниие тата ташланине куртăмăр.

Циркра клоун та пулчĕ. Вăл пире сиккелесе тата шӳтсем каласа култарчĕ.

*ц ц ц ц ц цех*

*Ц Ц Ц Ц Ц Ц Ц Цирк*

# Фф



фаб-ри-ка

| | | |
|---|---|---|
| Фо-ма | торф | те-ле-фон |
| Фе-ня | шарф | фу-фай-ка |
| Фе-дя | гра-фин | фор-точ-ка |
| фер-ма | фут-бол | фа-не-ра |



телефон

**Федя ашшĕ.**

Федя ашшĕ çĕвĕ фабрикинче ĕçлет. Ку фабрикăра пальтосем, фуфайкăсем çĕлеççĕ.

Федя ашшĕ питĕ ĕçчен. Ĕç нормине вăл яланах ирттерсе тултарать. Федя ашшĕне лайăх ĕçленĕшĕн орден панă.



**Феня аппа.**

Пирĕн колхоз пысăк. Колхозăн фермăсем пур: ĕне ферми, сысна ферми тата ыттисем те.

Сысна ферминче Феня аппа ĕçлет. Ку фермăра ăратлă сыснасем çитĕнтереççĕ. Фермăри сыснасем шултра, шап-шурă. Вĕсене Феня аппа лайăх пăхать.

Феня аппана Хисеп грамотипе наградăланă.

| | | |
|---|---|---|
| ва-фа | фе-ве | фо-во |
| ву-фу | ви-фи | вы-фы |

ф о|о о|о ф ф ф ф ф ф ф ф ф

фабрика, фуфайка, шарф



## Торф.

Пирĕн ялтан инçех мар шурлăхла вырăн пур. Унта торф нумай. Торфа машинăсемпе кăлараççĕ. Торф çынна пысăк усă парать. Торфпа кăмака хутса пӳртсене ăшăтаççĕ, уй-хирти, сад-пахчари çĕре çемçетеççĕ.

*ф о о / / о о ф ф ф ф ф ф*

*Феня сысна ферминче ĕçлет.*

# Ёё





мон-тёр

| | | |
|---|---|---|
| ёл-ка | лёт-чик | Фёк-ла |
| Лё-ня | мон-тёр | шах-тёр |
| шо-фёр | Алё-ша | са-мо-лёт |

## Ёлка.

Çĕнĕ çул çывхарса килет. Пирĕн шкулта ёлка пулать. Ёлка тума чăрăш илсе килеççĕ. Ăна пысăк пӳлĕме вырнаçтарса лартаççĕ. Эпир ёлкăна илемлетме кайăксем, самолётсем, çăлтăрсем тăватпăр. Пирĕн ёлка питĕ капăр пулĕ. Ёлкăра эпир юрăсем юрлăпăр, сăвăсем калăпăр, ташăсем ташлăпăр.



**Ăста ачасем.**

Алёшăпа Лёня — ăста ачасем. Вĕсем пĕрремĕш класра вĕренеççĕ.

Лёньăпа Алёша вылямалли самолёт тунă. Самолёт çил кăшт вăркăшсанах вĕçме пултарать.

Вĕренекенсем Алёшăсен самолёчĕ вĕçнине курма шкул умне тухнă.

Лёньăпа Алёша, çитĕнсе çитсен, лётчик пулма ĕмĕтленеççĕ.

ё ё ё ё ё ё ё ё ё ё ё ё ё ё ё ё

Лёня. Алёша. Лёва. Серёжа.



**Сывлăха сыхласси.**

Пирĕн шкулта тухтăр пулчĕ. Вăл ачасен сывлăхне тĕрĕслерĕ. Розăпа Серёжăн куçĕсем начар курнă. Çавăнпа вĕсене пĕрремĕш парта хушшине лартрĕç.

Тухтăр пире сывлăха мĕнле сыхламаллине ăнлантарчĕ. Алă çăвасси, шăл тасатасси, чĕрнесене касасси çинчен каларĕ. Çипуçа тусанран тасатма хушрĕ. Эрнере пĕрре мунчара çăвăнмалла, терĕ.

*Ё Ё Ё Ё Ё Ё Ё Ё Ё Ё Ё Ё Ё*

*Ёлка çине теттесем çакаççĕ.*



# Щщ

**плащ | раща | ещӗк | щӗтка**

## Колхоз утарӗ.

Раща варринче уҫланкă пур. Унта колхоз утар тунă. Утарта ретӗн-ретӗн вӗллесем лараҫҫӗ.

Ҫулла раща илемлӗ. Уҫланкăра темӗн чухлӗ чечек. Пыл хурчӗсем чечексен сӗткенне пухаҫҫӗ. Чечек сӗткенӗнчен пыл тăваҫҫӗ.

Утарти ӗҫе Фӗдор Данилович Щукин йӗркелесе пырать. Вăл хурт-хăмăр ăсти.



**Хăвна ху**
**таса тыт—**
**сывлăхлă пулăн!**



**Щёткăсем.**

Ку щёткăпа эпĕ шăл тасататăп.

Ку атă-пушмак тасатма кирлĕ.

Ку щёткипе тумтир тасататпăр.

Висĕ щётки те мана кирлĕ!

**ча | ща | чу | щи**

*щ щ щ щ плащ*

*Щ Щ Щ Щётка.*

**Ъ**



| | | |
|---|---|---|
| кёсъе | мăрье | разъезд |
| съезд | çемье | Патăръел |
| тухъя | статья | Мăнъял |

## Разъезд.

Пирĕн ялтан инçех мар чугун çул иртет. Унта разъезд пур. Разъезда пĕр-пĕрне хирĕç пыракан поездсене ирттерсе яма тунă.

Разъездра çуртсем пур. Вĕсенчен иккĕшĕнче разъездра ĕçлекенсем пурăнаççĕ. Ку çуртсем ыттисенчен пысăкрах, шап-шурă мăрьеллĕ.

Разъездра Мăнъял çыннисем те ĕçлеççĕ.



## Колхоз пухăвĕ.

Мăнъялăн пĕлтерӳ хăми пур. Унта çĕнĕ пĕлтерӳ çакнă. Колхоз пухăвĕ пулассине пĕлтернĕ.

Пуху клубра пулчĕ. Колхоз председателĕ Ухъянкин юлташ Мускаври съезд çинчен каласа пачĕ.

ъ ъ ъ ъ ъ ъ ъ ъ ъ ъ ъ ъ ъ

*Мăнъял. Разъезд. Съезд.*

# АЗБУКА ХЫҪҪĂН ВУЛАМАЛЛИ.

**Эпир вĕренетпĕр.**

Эпир, ҫамрăк ачасем,
куллен шкула ҫӳретпĕр.
Тĕрĕс ҫырма, вулама,
шутлама та пĕлетпĕр.



**Тупмалли юмах.**

*Ани шурă, вăрлăхĕ хура.* (К. . . . е.)



## Нинăпа асламăшĕ.

Нина шкултан киле таврăннă. Килĕнче унăн асламăшĕ çеç пулнă. Нина сĕтел хушшине ларнă. Вăл асламăшне кĕнеке вуласа панă. Унтан сăвă каланă. Асламăшĕ савăнса итленĕ. Вăл Нинăна мухтанă.

## Ваттисен сăмахĕ.

*Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр.*

Нина сăвă каласа панă.

Асламăшĕ Нинăна мухтанă.

## Боря.

Боря пĕрремĕш класра вĕренет. Вăл шкула вăхăтра çӳрет. Унта вăл питĕ тăрăшса вĕренет.

Шкултан таврăннă хыççăн Боря урок хатĕрлет. Унтан ашшĕ-амăшне пулăшать. Пушă вăхăтра кĕнеке вулать. Хăш чухне вăл юлташĕсемпе урамра вылять.

Боря ĕçчен те тирпейлĕ ача. Вăл хăйĕн юлташĕсемпе туслă пурăнать.



**Каласа пар:** эсĕ вăхăта мĕнле ирттеретĕн?



## Пирĕн класс.

Пирĕн класс пысăк та çутă. Унта партăсем тата доска пур. Партăсем умĕнче учитель валли сĕтелпе пукан лараççĕ. Кĕтесре шкап тата этажерка пур. Стена çине паллă çынсен сăнӳкерчĕкĕсене çакнă. Чӳречесем çинче чечексем ӳсеççĕ.

Пирĕн класс таса.

## Вĕренӳ эрни.

Эрнере çичĕ кун. Эпир ултă кун вĕренетпĕр. Пĕр кун килте канатпăр.

## Кун ячĕсем.

Тунтикун. Ытларикун. Юнкун. Кĕçнерникун. Эрнекун. Шăматкун. Вырсарникун.



## Пирĕн çемье.

Пирĕн çемьере тăватă çын: атте, анне, Таня ятлă йăмăк тата эпĕ. Атте колхоз бригадирĕ. Анне фермăра ĕçлет. Эпĕ шкулта пĕрремĕш çул вĕренетĕп. Таня пилĕк çулта. Вăл ача садне çӳрет.



## Туссем.

Тантăшпа эпир ялан
курăнатпăр пит аван.
Пурăнатпăр пĕр ялта,
пĕр ялта — пĕр колхозра.
Вĕренетпĕр пĕр шкулта,
пĕр шкулта та пĕр класра.



**Чăваш халăх сăвăçи.**

Константин Васильевич Иванов — чăваш халăхĕн паллă сăвăçи. Константин Иванов лайăх сăвăсем, юмахсем çырнă. Вăл тата «Нарспи» ятлă кĕнеке çырнă. Унта чăваш халăхĕн ĕлĕкхи пурнăçне кăтартса панă.



**Шыв юхать.**

Шăнкăртатса шыв юхать
çӳллĕ валак пусĕнче.
Кĕмĕл пекех ялтăрать
шывĕ хĕвел çутинче.

*Константин Васильевич Иванов.*



## Пирĕн колхоз.

Пирĕн колхоз пысăк та пуян. Унăн уйхирĕ сарлака.

Колхозăн выльăх-чĕрлĕх фермисем пур. Тĕрлĕ ялхуçалăх машинисем нумай. Грузовиксем пур. Колхоза электричество кĕртнĕ.

Пирĕн колхоз тулă, ыраш, пăрçа акса тăвать. Колхоз сахăр кăшманĕ, кукуруза та акать. Çакă выльăх-чĕрлĕх нумай усрама май парать.

Колхозăн клуб пур. Унта час-часах кино кăтартаççĕ. Кино курма шкул ачисем те çӳреççĕ. Колхозниксен пурнăçĕ çултан-çул лайăхланса пырать.

## Ваттисен сăмахĕ.

*Колхоз пурлăхĕ—халăх пурлăхĕ. Ăна лайăх упрас пулать.*



## Шупашкар.

Чăваш республикин тĕп хули — Шупашкар. Вăл Атăлăн сылтăм çыранĕнче сарăлса ларать. Унăн урамĕсем сарлака та вăрăм. Унта автомобильсем, автобуссем, троллейбуссем çӳреççĕ. Шупашкарта илемлĕ парксемпе скверсем пур. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисенче палăксем лараççĕ. Чи пысăкки — Владимир Ильич Ленин палăкĕ. Шупашкарта заводсемпе фабрикăсем, шкулсемпе библиотекăсем нумай. Пирĕн тĕп хула çултан-çул пысăкланса та илемленсе пырать. Шупашкар — Атăл тăрăхĕнчи чаплă хуласенчен пĕри.

*Шупашкар - Чăваш республикин тĕп хули.*



## Çĕнĕ завод.

Шупашкартан инçех мар çĕнĕ завод ларать. Унта питĕ вăйлă тракторсем туса кăлараççĕ.

Çĕнĕ заводра тĕрлĕ цехсем нумай. Цехсенче вуншар пин çын ĕçлет. Вĕсем хушшинче пирĕн Тăван çĕршывăн тĕрлĕ халăх ывăлĕсемпе хĕрĕсене курма пулать.

Шупашкар завочĕ туса кăларакан тракторсене хамăр çĕршывăн нумай вырăнĕсене ăсатаççĕ.



**Шупашкарти юханшыв порчĕ.**

Шупашкарта юханшыв порчĕ пур. Унта Атăл тăрăх çӳрекен теплоходсем, баржăсем чарăнаççĕ.

Теплоходсемпе пассажирсем питĕ нумай çӳреççĕ. Теплоходсем портра тăнă вăхăтра вĕсем Шупашкарпа паллашаççĕ. Хулари музейсене кĕрсе кураççĕ. Вĕсем Владимир Ильич Ленин музейĕнче те пулаççĕ.

Баржăсемпе пирĕн республикăна тĕрлĕрен машинăсем, япаласем турттарса килеççĕ. Портран çĕршывăн ытти вырăнĕсене Шупашкарта туса хатĕрленĕ япаласене ăсатаççĕ.

Шупашкарти юханшыв порчĕ–кунĕн-çĕрĕн ĕçре.



### Хĕл çитрĕ.

Çанталăк сивĕтрĕ. Часах юр çурĕ. Таврана шап-шурă турĕ. Шывсем шăнса ларчĕç.

Колхоз çуракине хатĕрленме тытăнчĕ. Трактор юсама, вăрлăх тасатма пуçларĕç.

Ачасем çунашкасене, йĕлтĕрсене хатĕрлерĕç. Вĕсем савăнса тăвайккинче ярăнаççĕ.

### Тупмалли юмах.

*Шурă çитти пĕтĕм хире витсе хучĕ.* ( . р.)

### Пушă вăхăтра.

Васкăр, ачасем,
пурте урама!
Илĕр йĕлтĕрсем,
айтăр ярăнма!





## Мускав.

Мускав — питĕ пысăк та илемлĕ хула. Унта пурăнакансен йышĕ çуллен ӳсет. Хулари çуртсем илемлĕ, çӳллĕ. Урамсенче троллейбуссем, автобуссем çӳреççĕ. Çĕр айĕнче метро пур. Мускаврăн чи чаплă площачĕ — Хĕрлĕ площадь. Хĕрлĕ площадьре — Ленин мавзолейĕ. Мускав — Совет Союзĕн тĕп хули. Кунта Совет правительстви ĕçлет. Кунта Владимир Ильич Ленин ĕçленĕ.



Мускав урамĕсенче вĕçĕ-хĕррисĕр халăх çӳрет, автомашинăсем нумай. Урамра питĕ асăрханса, йĕркеллĕ çӳрес пулать. Мĕнле çӳремеллине кăтартакан йĕркесем те пур. Çуран тата машинăпа çӳрекенсен те ку йĕркесене пăхăнмалла. Ăна хулари милиционерсем асăрхаса тăраççĕ.

*Мускавăн чи чаплă площачĕ — Хĕрлĕ площадь. Хĕрлĕ площадьре — Ленин мавзолейĕ.*



**Владимир Ильич Ленин.**

Ленин ĕçхалăхĕн çулпуçĕ, аслă вĕрентекенĕ, çывăх тусĕ пулнă. Вăл ĕççыннисен пурнăçне çăмăллатма тăрăшнă. Рабочисемпе хресченсен ачисем пурте вĕренччĕр, тенĕ. Эпир Владимир Ильич Ленин вĕрентнине асра тытатпăр. Вăл кăтартса хăварнисене туса пыратпăр.



Ленин ĕçхалăхĕн çулпуçĕ пулнă. Ĕçхалăх Ленин çулĕпе пырать.



**Пирĕн герб.**

Тĕнчери кашни çĕршывăн герб пур. Пирĕн çĕршывăн гербĕ çине çурлапа мăлатук ӳкернĕ. Вăл рабочисемпе хресченсем килĕштерсе пурăннине, власть ĕçхалăхĕн аллинче пулнине пĕлтерет. Тулă пучахĕсен кăшăлĕ варринче — çĕр чăмăрĕ. Ăна хĕвел çутатать. Çĕр чăмăрĕ çийĕнче хĕрлĕ çăлтăр ялкăшать. Çаксем вĕсем Совет Союзĕ телейлĕ те хăватлă, мирлĕ çĕршыв пулнине пĕлтереççĕ.

Пирĕн герб çине 15 чĕлхепе „Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!“ тесе çырнă.




## Совет Çарĕ — пирĕн вăй.

Совет халăхĕ мирлĕ пурнăçшăн тăрăшать. Унăн лăпкă пурнăçне тăшмансем пăсасшăн.

Совет çыннисен лăпкă пурнăçне Совет Çарĕ хытă сыхлать.

## Совет Çарне.

Çĕнĕ юрăсем юрлатпăр
эпир уçă сасăпа.
Совет Çарне ыр сунатпăр
пурте ăшă кăмăлпа!

*Совет Çарĕ сывă пултăр!*




**Андриян Григорьевич Николаев.**

Космос паттăрĕсенчен пĕри—чăваш халă хĕн ывăлĕ Андриян Григорьевич Николаев

Вăл Чăваш республикинчи Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл ялĕнче çуралнă.

А. Г. Николаев ача чухнех ĕçе юратнă ашшĕ-амăшне пулăшнă. Вăл тăрăшса вĕреннĕ, юлташĕсемпе туслă пулнă.

Андриян Григорьевич–лётчик-космонав икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ.

*Андриян Григорьевич Николаев.*




**Уяв юрри.**

Пурнăç çулĕ аслă,
ĕмĕтсем хитре.
Ытарми пуласлăх
илĕрттет пире.

Вĕрентет çĕршывăм
паттăрсем пулма.
Çитĕнетпĕр сывă-
çĕнтерӳ тума.

*Ялан мир пултăр тĕнчере!*

ББК 83.3 Чув.я72
Н 63

Петр Николаевич Николаев

БУКВАРЬ

На чувашском языке

Редактор Н. Н. Маслова
Оформление Г. М. Онуфриевой
Художественный редактор Е. Е. Михайлова
Технический редактор В. П. Окина
Корректор Л. А. Иванова

ИБ № 1618

Сдано в набор 25.06.84.
Подписано в печать 30.08.84.
Формат 70×90 1/16. Бумага офсетная № 1.
Гарнитура школьная. Печать офсетная.
Усл. печ. л. 9,36+0,39 вкладка+0,29 форзац.
Усл. кр.-отт. 39,57.
Учетно-изд. л. 9,36+0,56 вкладка+0,29 форзац.
Тираж 13000 экз. Заказ № 2503. Изд. № 100.
Цена 30 коп.

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета
Чувашской АССР по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли,
428019, Чебоксары, Канашское шоссе, 15.

Н $\frac{4306020200-108}{М\ 136(03)-85}$ 100—85

© Чувашское книжное издательство, 1984 г.


А Ӑ Б В
Ё Ж З И
Хатӗр пул
Н О П Р
Ӳ Ф Х Ц
Ъ Ы Ь


Г Д Е Ё
Й К Л М
С С Т У
Ч Ш Щ
Э Ю Я

30 пус

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ

| | | | | | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| А | А | А | а | а | а | У | У | У | у | у | у | у | у | Н |
| Н | Н | н | н | н | Л | Л | л | л | л | М | М | м | м | м |
| м | Ă | Ă | ă | ă | ă | Р | Р | р | р | р | р | Х | Х | х |
| х | х | Ы | Ы | ы | ы | ы | Ш | Ш | ш | ш | ш | ш | В | В |
| в | в | в | С | С | с | с | с | И | И | И | и | и | и | Ç |
| Ç | ç | ç | П | П | П | п | п | п | Ч | Ч | ч | ч | Е | Е |
| е | е | е | е | Т | Т | т | т | т | Й | й | й | К | К | к |
| к | к | Э | э | э | Ӳ | Ӳ | ӳ | ӳ | Ĕ | ĕ | ĕ | О | о | о |
| о | ь | ь | Я | я | я | З | з | з | з | Ю | Ю | ю | ю | Ж |
| ж | ж | Б | Б | б | б | Д | д | д | д | Г | Г | г | г | Ц |
| Ц | ц | Ф | ф | ф | Ё | ё | ё | ё | Щ | Щ | щ | щ | ъ | ъ |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ул | ал | лă | ан | лан | нан | ар | ра |
| ха | ху | хă | лăн | ых | ыр | шă | мăш |
| лăх | мăл | ву | вă | нă | вăр | рăм | хал |
| ва | вы | су | са | хан | сă | ми | ши |
| ça | уç | çу | çын | çă | пу | лам | шăр |
| пă | çе | пан | пар | рăç | лап | не | пи |
| нал | леш | рем | çум | ту | эп | тă | эр |
| сеп | рăх | ка | тӳ | чă | пĕ | ме | чĕ |
| пӳ | ки | юл | со | ор | но | пăнь | вет |
| герь | бо | чи | фер | ща | щёт | вод | даль |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| на | ну | ла | ма | ул | ал | лă | ан |
| ман | шар | рам | лар | ха | ху | хă | лăн |
| рăх | хăр | ша | ран | лăх | мăл | ву | вă |
| выр | нав | рас | мах | ва | вы | су | са |
| си | ван | ли | ус | ça | уç | çу | çын |
| па | еп | ле | лĕ | пă | çе | пан | пар |
| хи | пе | се | ил | нал | леш | рем | çум |
| йăм | ре | май | пин | сеп | рăх | ка | тӳ |
| рăш | рес | сăк | чĕк | пӳ | ки | юл | со |
| ля | таш | за | ёл | герь | бо | чи | фер |